Пирĕн календарь



# АСЛĂ ТĔПЧЕВÇĔ

*(Н. И. Ашмарин 100 çул тултарнă май)*

Халăх хăйĕншĕн ырă ĕç тăвакансене манмасть, ĕмĕрсем хушши вĕсене ырăпа асăнса пурăнать, хисеплет. Н. И. Ашмарин ячĕ те чăвш халăхĕшĕн яланах ырăпа асăнма тивĕçлĕ ят.

Н. И. Ашмарин чăвашсемшĕн пĕлмен çын мар: унăн ячĕ чăваш хушшинче пирĕн ĕмĕрĕн пуçламăшĕнчех анлăн сарăлать. Халăхра ун чухне вулама-çырма пĕлекенсем те шутлă çеç пулнă, çапах та хăйне: эсĕ йăхсăр-хурăнташсăр çын, санăн иртни те, пуласлăху та çук, тесе хĕртакансене ĕненмен вăл, анчах хирĕç таврăрма унăн вăйĕ те, пĕлĕвĕ те çитмен. Çавăнпа вăл хăйне хута кĕрекенсем тухасса кĕтнĕ. Халăх кĕтни шăпах тата тӳрре тухнă. Ялтан яла, пасартан пасара, таçта-таçта пурăнакан чăваш тăрăхах сăмах сарăлнă: Хусанта пĕр нумай вĕреннĕ çын пур тет. Хăй чăвашсем çинчен темиçе кĕнеке çырнă та тет. Халĕ тата чăвашсен юрри-сăввисене, юмахĕ-халапĕсене тата чĕлхери пур сăмахсене пухса пысăк-пысăк кĕнеке кăларасшăн тет, çав кĕнекене кăларма хутла пĕлекен çынсенчен хăйне пулăшма ыйтать тет. Чĕмпĕрти Иван Якăльчпа та туслă тет вăл. Вырăс тет хăй, Ашмарин ятлă тет.

Хăйĕн тăван чĕлхипе кĕнеке вуласа çунатланнă, пĕлӳлĕхĕн техĕмĕпе уссине чухла пуçланă халăха çак хыпар хумхантармаллипех хумхантарса янă.

Сăмаххи ку вара тĕрĕсех пулнă. 1900 çулта Н. И. Ашмарин хăй шутласа хунă чăваш сăмахĕсен кĕнеки валли материал епле пухмалли çинчен ятарласа программа пичетлесе кăларать. Программине Чĕмпĕрти чăваш шкулне И. Я. Яковлев патне ярса парать. Н. И. Ашмарин ĕçĕсемпе унчченех лайăх паллашнă И. Я. Яковлев хавасланса ученăя пулăшма килĕшет. Чи малтан вăл программăпа чăваш шкулĕнче вĕренекен çамрăксене паллаштарать, вĕсене чăваш словарĕн пĕлтерĕшĕ çинчен каласа парать, унтан, кирлĕ материала пухса ученăя тăратма ыйтса, Чĕмпĕр шкулĕнчен вĕренсе тухнă хăйĕн ученикĕсем патне çырусем çырать.

Тытăнаççĕ вара чăваш çамрăкĕсем ĕçлеме! Çырусем Н. И. Ашмарин патне вĕçе-вĕçĕн, таттисыпписĕр пырса тăраççĕ — Чĕмпĕр, Хусан, Ĕпхӳ, Самар кĕпĕрнисенчен, пĕр сăмахпа каласан, чăвашсем пурăнакан пур вырăнсенчен те. Пухăнакан материала йĕркелеме кăна ĕлкĕр. Анчах ку ĕçре те Ашмарина пулăшакансем тупăнаççĕ: ученăй ертсе пынипе словарь материалне куçарса çырас, йĕркелес ĕçе вырăс мар халăхсем валли учительсем хатĕрлекен семинарире вĕренекен чăваш çамрăкĕсем туса пыраççĕ (Н. И. Ашмарин хăй çак çулсенче шăпах çав семинарире географи вĕрентнĕ пулнă).

Çапла пĕр-пĕрне пулăшса, пĕрпĕринпе канашласа ĕçленĕ вăл вăхăтра икĕ пысăк çын — Иван Яковлевич Яковлев чăвашпа Николай Иванович Ашмарин вырăс. Иккĕшĕ икĕ тĕрлĕ ĕçленĕ пулин те, тĕллевĕ вĕсен пĕрре пулнă: чăваш халăхĕ хушшинче пĕлӳлĕхпе культура сарасси. Иккĕш те

вĕсем чăваш халăхне чĕререн юратнă, çавăнпа та харпăр хăй ĕçĕнче чунпа çунса ĕçленĕ. Çавăнпа та ячĕсем те вĕсен халăх хушшинче хăварт сарăлса чыса кĕнĕ.

Николай Иванович Ашмарин 1870 çулхи сентябрĕн 22-мĕшĕнче Етĕрне хулинче çуралнă. Аслашшĕ унăн Ярославль таврашĕнчен куçса килнĕ вак сутăçă пулнă. Малтанхи вăхăтра ашшĕ те сутуилĕпе аппаланкаланă, анчах та, ĕç ăнса пыманнине пула, каярахпа уездри земствăна ĕçлеме куçнă. Николай çуралсанах, Ашмаринсен çемйи Етĕрнерен Кăрмăша куçнă, пулас ученăйăн ачалăх кунĕсем çав хулара иртнĕ. Чăваш пурнăçĕпе пулас тĕпчевçĕ ачаранах çывăх паллашнă. Кăрмăш уезд хули пулнă май, унта чăвашсем ĕçпе те, пасара-мĕне те сахал мар çӳренĕ, тен, курма-пĕлме тăрăшакан çамрăк çывăхри чăваш ялĕсене те тухса çӳремесĕрех пулман пуль. Тăван мар чĕлхесем те Н. И. Ашмарина ачаранах интереслентернĕ, ахальтен мар вăл Чулхулари гимназие пĕтернĕ хыççăн Мускаври хĕвелтухăç чĕлхисен институтне вĕренме кĕрет.

Институтра араб, перс, латин, грек чĕлхисене вĕреннĕ хушăрах Н. И. Ашмаринăн малашне чăваш чĕлхине тĕпчес ĕмĕт те çирепленет. Малтанлăха вăл, чăваш халăх юрри-сăввисене пухса, вĕсене наука енчен тишкерсе тухать. Каярахпа пысăк ĕç çырма материал пухма тытăнать.

Института ăнăçлă пĕтернĕ хыççăн Н. И. Ашмарин Хусанти вырăс мар халăхсем валли учительсем хатĕрлекен семинарире ĕçлеме тытăнать. Тепĕр икĕ çултанах вăл «Материалы для исследования чувашского языка» ятпа пысăк ĕç çырса кăларать (1898 ç.). 1902 çулта Н. И. Ашмаринăн «Булгары и чуваши» ятлă ĕçĕ тухать, 1903 çулта «Опыт исследования чувашского синтаксиса» ятпа тепĕр пысăк кĕнеке пичетленет. Çак ĕçсем вĕсен авторĕ пысăк та пултарулă ученăй пулнине кăтартса параççĕ. Н. И. Ашмарин тĕрĕк чĕлхисене тĕпчекенсем хушшинче чи паллисенчен пĕри пулса тăрать, унăн ятне Российăри ученăйсем çеç мар, Европăра та хисеплесе асăнма тытăнаççĕ.

Малашнехи çулсенче Н. И. Ашмарин тата темиçе пысăк ĕç çырать: чăваш тата ытти тĕрĕк чĕлхисенчи евĕрлев сăмахĕсем çинчен, чăваш сăмахĕсенчи авалхах йĕрĕсем çинчен («Отголоски золотоордынской старины в народных верованиях чуваш», Хусан, 1921) т. ыт. те. Вĕсенчен чи паллăраххи — чăваш синтаксисĕн иккĕмĕш кĕнеки (вăл 1923 çулта Чĕмпĕрте тухать). Н. И. Ашмарин ĕçĕсене пула, Октябрь революцин тĕлне ытти тĕрĕк чĕлхисем хушшинче чăваш чĕлхи чи тарăнрах тĕпченĕ чĕлхе пулса тăрать. Çук, ахальтен хисеплемен чăваш халăхĕ Н. И. Ашмарина! Тĕпчевçĕ халăха хăйĕн чĕлхин йĕркитытăмне ăнланса илме пулăшнă, унăн илемĕпе хăватне, пуянлăхне, кăтартса панă. Н. И. Ашмарин ĕçĕсем хыççăн чăваш чĕлхи чухăн, унпа нимĕнле шухăша та уçăмлă палăртма çук тесе çирĕплетме текех май килмен.

Чăваш чĕлхинчи сасăсен хисепне тата вĕсен сăмахсемпе сăмах формисене уйăрас вăйне çырулăх тунă чухне И. Я. Яковлевах палăртнă, унсăрăн вăл, сăмахран а-па ă, е-пе ĕ, с-па ç сасăсем валли уйрăмшар саспалисем тăвайман пулĕччĕ. Анчах та наука енчен И. Яковлев чăваш фонетикине çутатса паман. Çак ĕçе чи малтан Н. И. Ашмарин пурнăçланă. Вăл чăваш чĕлхинчи сасăсем хăш сăмахра епле илтĕннине çав тери тĕрĕс кăтартнă. Паян куна та чăваш фонетикипе интересленекен çын унăн ĕçĕсенче хăйне кирлине пĕтĕмпех тупма пултарать.

Чăваш морфологийĕ те Н. И. Ашмарин ĕçĕнче туллин сăнланнă. Каярахпа чăваш морфологине тĕпчекенсем вăл тупса палăртнă формăсемпе категорисене, тĕпрен илсен, çав халлĕнех йышăнаççĕ. Юлашки çулсенче кăна хăшпĕр пуплев пайĕсемпе вĕсен формисем çине çĕнĕлле пăхма пуçларĕç.

Синтаксиса тĕпчес енĕпе те Н. И. Ашмарин пысăк ĕç тунă. Сăмахран, вăл пуçласа чăваш чĕлхинче причастиллĕ тата деепричастиллĕ сăмах майлашăвĕсем славян чĕлхисенчи пăхăнуллă предложенисем вырăнĕнче çӳренине кăтартса панă, çав майлашусенче причастипе деепричастисен хăйсен подлежащийĕ пулма пултарнине палăртнă. Причастиллĕ сăмах майлашăвĕсен пĕр тĕсне вăл ят предложенисем тесе пăхнă. Каярахпа унăн ученикĕсем Т. М. Матвеевпа Ф. Т. Тимофеев, çав ыйтăва малалла тĕпчесе, предложенилле членсен теорине никĕсленĕ.

Причастипе деепричастисен хăйсен подлежащийĕсем пулма пултарнине шута илсе, Т. М. Матвеевпа Ф. Т. Тимофеев предложенилле членсем шутне çав подлежащиллисене кăна кĕртнĕ (сăмахран: В ă х ă т р а ç у м ă р ç у н и калчасемшĕн усăллă пулчĕ; Х ĕ в е л а н а с ч у х вĕсем яла çитсе кĕчĕç), подлежащисĕррисене ахаль членсем тесе пăхнă (Ç у м ă р а к ĕ т н и ахалех пулчĕ; Ç у л а т у х а с у м ĕ н юлташсемпе канашласа илтĕмĕр). Ыйтăва çакăн пек пăхни, паллах, тĕрĕсрех, вăл предложенилле членсене ахаль членсенчен уйăрма май парать. Анчах та каярахпа тухнă шкул учебникĕ, Н. И. Ашмарин вĕрентни патне таврăнма пăхса, ку ыйтăва пĕтĕмпех пăтраштарса ярать, предложенилле членсене ытти категорисенчен уйăрса илмелле мар туса хурать.

Калас пулать, синтаксис ыйтăвĕсене Н. И. Ашмарин йĕркипе пăхса тухман, уйрăм ыйтусем çинче кăна чарăнса тăнă. Уншăн пирĕн тĕпчевçе ӳпкелеме сăлтав çук. Вăл вăхăтра синтаксис науки ураланма кăна тытăннă-ха, тĕрĕк чĕлхисен синтаксисне тĕпчес ĕçе тытăннă кăна пулнă. Пуçласа тăвакан ĕç, паллах, пур енчен те пулса çитеймест. Хăй вăхăтĕнче тума пултарнине Н. И. Ашмарин пĕтĕмпех тунă.

Н. И. Ашмарин, тӗпрен илсен, чӑваш чӗлхине тӗпченӗ, анчах та вӑл чӑваш чӗлхин тӗпчевҫи кӑна пулман. Чӗлхе факчӗсем ҫине вӑл чӑн-чӑн тӗпчевҫӗ куҫӗпе пӑхма пултарнӑ, хӑй тӗпчекен чӗлхене вӑл яланах ытти чӗлхесемпе танлаштарма тӑрӑшнӑ. Ку ӗҫре ӑна ытти тӗрӗк, перс, грек, латин тата Европа чӗлхисене лайӑх пӗлни пулӑшнӑ. Ҫавӑнпа та Н. И. Ашмарин ӗҫӗсем чӑваш чӗлхи наукишӗн кӑна мар, пӗтӗм тюркологишӗн пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулнӑ. Ученӑйсем ӑна паянхи куна та паллӑ совет тюркологӗсенчен пӗри тесе хисеплеҫҫӗ.

Н. И. Ашмарина ҫапла хакланӑшӑн эпир савӑнмаллипех савӑнатпӑр. Ҫапах та пирӗншӗн вӑл чи малтан хӑйӗн пӗтӗм кунҫулне, хӑйӗн пултарулӑхӗпе пысӑк талантне чӑваш пурнӑҫӗпе ҫыхӑнтарнӑ вырӑс ҫынни, пирӗншӗн вӑл — чи малтан чӑваш тӗпчевҫи.

Чӑваш халӑхне тӗпчевҫӗмӗр тӑван чӗлхен илемӗпе хӑватне кӑтартрӗ кӑна мар, ӑна вӑл чӗлхемӗрӗн йӗрне-тымарне тупма пулӑшрӗ, вӑл хӑш-хӑш чӗлхепе тӑванлӑ пулнине ӗненмелле кӑтартса пачӗ. Н. И. Ашмаринӑн ӗҫӗсем чӑваш историне тӗпчес ӗҫре те калама ҫук пысӑк пулӑшу пачӗҫ.

Наука тӗнчи Н. И. Ашмарин ӗҫӗсемпе паллашиччен чӑвашсем пирки тӗрлӗ шухӑшланӑ: пӗрисем чӑвашсене марисемпе, мӑкшӑсемпе тӑванла халӑх пулӗ тенӗ, теприсем тӗрӗк халӑхӗ тесе те пӑхнӑ. Анчах ҫирӗплетсех калама никамӑн та сӑлтав ҫителӗклӗ пулман. Марисемпе пӗр ушкӑна кӗртекенсем чӑвашсем ҫине ытларах тум-ҫи, сӑн-пуҫ енчен пӑхнӑ, тӗрӗк йӑхне кӗртекенсем чӑвашсен чӗлхине ҫителӗклӗ пӗлмен. Ашмарин ӗҫӗсем хыҫҫӑн ҫеҫ чӑвашсен тӗрӗксемпе тӑван халӑх пулни пуриншӗн те уҫҫӑнах курӑнса кайнӑ. Ку ҫеҫ те мар, ученӑй чӑвашсен ҫывӑх аслашшӗсем Атӑлпа Кама тӑрӑхӗнчи пӑлхарсем пулнине те ҫирӗплетсех ӗнентерме пултарнӑ. Паян кун та ҫак шухӑш наукӑра ҫирӗп йышӑннӑ теори шутланать. Ҫапла вара чаплӑ тӗпчевҫӗмӗр ӗҫӗсене пулах чӑваш халӑхӗн историре ҫухалнӑ йӗрӗ тупӑнать.

Н. И. Ашмарин наукӑна чи малтан чӗлхеҫӗ пулса кӗрсе юлчӗ. Тӗрӗссипе вӑл чӗлхеҫӗ кӑна мар, историк та, этнограф та, фольклорист та. Унӑн чӑваш юррисем ҫинчен ҫырнӑ ӗҫне маларах асӑнтӑмӑр-ха. Кунсӑр пуҫне вӑл тата чӑваш юррисене хӑйсене чылай пухса пичетлесе кӑларать, ваттисен сӑмаххисене пуҫласа пухса кӑлараканни те вӑлах. Тӗпчевҫӗ халӑх юрри-сӑввине, юмах-халапне пухса пичетлет кӑна мар, вӗсен илемӗпе техӗмне, тарӑн шухӑшне асӑрхама вӗрентет, чӗрере вырӑ туйӑм ҫуратать. Мӗн чухлӗ юрӑ-сӑвӑ, юмах-халап тата унӑн 17 томлӑ чӑваш словарӗнче! Мӗн чухлӗ этнографи материалӗ тата кунта! Ахальтен мар ку словаре ученӑйсем иртнӗ ӗмӗр вӗҫӗнчи чӑваш пурнӑҫӗн энциклопедийӗ тесе хакланӑ. Ҫак словарьсӗр пуҫне Н. И. Ашмарин урӑх нимӗнле ӗҫ те туман пулсан та, унӑн ячӗ ӗмӗрлӗхех чӑваш халӑхӗн асӗнче юлма тивӗҫлӗ пулнӑ пулӗччӗ.

Тӗпчевҫӗ хӑйӗн ӗҫне мӗн тери киленсе те юратса тунине, вӑл чӑваш сӑмахӗн техӗмне мӗн тери чухланине унӑн словарьти хӑшпӗр асӑрхаттарӗвӗсенчен те лайӑх курма пулать. Акӑ вӑл пӗр юрӑ сыпӑкӗ илсе парать:

Пирӗн куҫран ма пӑхас —
Ҫут сӑлтӑра курман-и.

Чӑтаймасть тӗпчевҫӗ, кӑмӑл тулнипе хӑйӗнчен хушса хурать: еплелле тӗлӗнмелле сӑнар!

Истори чӑваша кӑмӑлласах кайман. Авалхи ҫырулӑх та сыхлансах юлман пирӗн. Ҫавна пула иртнӗ пурнӑҫӑн йӗрӗсене пирӗн юрӑ-сӑвӑра, юмах-халапра — пӗр сӑмахпа каласан, халӑх сӑмахлӑхӗнче ытларах шырама тивет. Чӑваш историйӗн ҫулӗ-йӗрӗ унӑн чӗлхи урлӑ лайӑх курӑнать. Ҫак енчен пӑхсан, чӑвашӑн иртнӗ кунҫулне сӑнлакан кӗнекесенчен Н. И. Ашмарин словарӗпе танлашма пултараканни урӑх ҫук пулӗ тесен те йӑнӑшах пулас ҫук.

Ӗҫӗсен пӗлтерӗшӗ наукӑшӑн калама ҫук пысӑк пулнӑ пулин те, революциччен тӗпчевҫе наука кӗрекине ларма тӳр килмен. Пичетлекен ӗҫӗсем ӑна тупӑш паман, наука степенӗ те пулман ун, ӗҫлессе те вӑл учительсен семинарийӗнче ӗҫленӗ — географи вӗрентнӗ. Служба енчен пӑхас пулсан, наука Н. И. Ашмаринӑн, хальхилле каласан, хобби кӑна пулнӑ. Унӑн ӗҫӗсен хакне чухлакан ученӑйсем ӑна темиҫе хутчен те Хусан университечӗн профессорне суйлама сӗнсе пӑхнӑ. Анчах та вӑл вӑхӑтра чӑваш чӗлхи пек чӗлхесем университетра вӗрентмелли чӗлхесем шутланайман — «инородец» чӗлхи ҫеҫ пулнӑ.

Ӗҫӗсене пичетлеме те ҫӑмӑл пулман тӗпчевҫе. Революциччен вӑл, сӑмахран, хӑйӗн словарӗн икӗ кӗнекине ҫеҫ кӑларма пултарнӑ (1910, 1912 ҫулсенче), вӗсене те Хусан университечӗн профессорӗ Н. Ф. Катанов пулӑшнипе кӑна (укҫине Хусан вӗрентӳ округӗ ҫумӗнчи куҫару комиссийӗ панӑ). Словарӗн ытти кӗнекисене кӑларма патша Раҫҫейӗнче никамӑн та укҫа «тупӑнман». Мӗн тӑвас тетӗн ӗнтӗ: патша влаҫӗшӗн чӑваш «инородец» ҫеҫ пулнӑ.

Кӑҫал эпир чаплӑ ученӑй ҫуралнӑранпа 100 ҫул тултарнине палӑртатпӑр. Анчах та Н. И. Ашмарин пирӗншӗн историе куҫнӑ ят мар. Тӗпчевҫӗ паян кун та хӑйӗн мухтавлӑ ӗҫӗсемпе пирӗн хушӑмӑрта. Паян кун та унӑн кӗнекисем кашни чӑваш тӗпчевҫишӗн куллен ал айӗнче тытмалли кӗнекесем.

30-мӗш ҫулсенче Атӑл тӑрӑхӗпе Вӑтам Азире пурӑнакан вырӑс мар халӑхсем хушшинче чӑвашсем пуринчен малтан шкулта тӑван чӗлхене вӗренме учебниксем хатӗрлеме пултарнӑ пулсан, ҫав учебниксен авторӗсемпе танах Н. И. Ашмарина тав тумалла. Унӑн ӗҫӗсем пулман пулсан, ҫав учебниксем те ҫыранайман пулӗччӗҫ. Сӑмах май калас пулсан, вӑл учебниксен теори содержанийӗ паянхи куна та нумаях улшӑнман, авторӗсем кӑна улшӑннӑ. Халӑха валли куллен тытка-

ламалли вырӑсла-чӑвашла е чӑвашла-вырӑсла чылай пысӑк словарьсемех кӑларса тӑма пултартӑмӑр пулсан,—каллех Н. И. Ашмарина пула. Унӑн 17 томлӑ словарӗсӗр ку словарьсем ниепле те тухайман пулӗччӗҫ.

Тайма пуҫ пуриншӗн те хисеплӗ те сумлӑ тӗпчевҫӗмӗре!

Чӑваш халӑхӗ те ученӑя ырӑ ӗҫшӗн яланах ырӑпа тавӑрма тӑрӑшнӑ. Ҫӳлерех асӑнтӑмӑр ӗнтӗ, Н. И. Ашмаринӑн тӗп ӗҫӗ — 17 томлӑ чӑваш словарӗ, ӑна ҫӗршер ҫын нумай ҫулсем хушши, тӳлевсӗр-мӗнсӗр пулӑшса пыман пулсан, ҫут тӗнчене тухаймастчӗ те пулӗ. Словаре кӗнӗ материалсен ытларах пайӗ — вырӑнти корреспондентсем урлӑ пухнӑскерсем. Пуханнӑ материала йӗркелеме те малтанхи вӑхӑтра Хусанти учительсен семинарийӗнче вӗренекен чӑваш ҫамрӑкӗсем, каярахпа Чӗмпӗрти ҫутӗҫ институчӗпе Хусанти хӗвелтухӑҫ институчӗн студенчӗсем нумай пулӑшнӑ. Чӑваш республикине тунӑ хыҫҫӑн словаре кӑларас ӗҫе Чӑваш правительстви пӗтӗмпех хӑй ҫине илет, словарь ӗҫне туса пыма вӑл вӑхӑтри чи паллӑ чӑваш чӗлхеҫисене уйӑрса лартать.

1921 ҫулхине, Атӑл тӑрӑхне хӑрушӑ выҫлӑх хупласа илсен, правительство ученӑя пысӑк пулӑшу парать, ҫавна пула Н. И. Ашмарин ку йывӑр вӑхӑта нушасӑр-мӗнсӗрех иртгерсе ярать.

1927 ҫулта Н. И. Ашмарина Чӑваш республикин ЦИК членне суйлаҫҫӗ. 1929 ҫулта Хусанти хӗвелтухӑҫ институтӗнчи чӑваш уйрӑмӗпе Чӑваш республикинчи организацисем тӑрӑшнипе Н. И. Ашмарина СССР Наукӑсен Академийӗ хӑйӗн член-корреспондентне суйлать.

1931 ҫулта Хусанти хӗвелтухӑҫ институчӗ ҫумӗнчи чӑваш уйрӑмӗ хупӑнать. Ҫакӑн хыҫҫӑн Н. И. Ашмарин пенсие тухать. 1933 ҫулхи августӑн 26-мӗшӗнче Н. И. Ашмарин вилет, пытарасса ӑна Хусантах пытараҫҫӗ.

**И. АНДРЕЕВ,**
**филологи наукисен кандидачӗ**

---

# Н. И. АШМАРИНӐН ВӖРЕНЕКЕНӖ, ПУЛӐШАКАНӖ

*Тюркологи докторӗн, СССР наукисен Академи член-корреспонденчӗн Н. И. Ашмаринӑн нумай-нумай ӗҫӗ хушшинче уйрӑмах чӑваш чӗлхин вунҫичӗ томлӑ словарӗ паян кун та наукӑра пысӑк пӗлтерӗшлӗ шутланать.*

*Словаре хатӗрленӗ чухне Н. И. Ашмарин хӑй вӑхӑтӗнче тата унччен чӑвашла тухнӑ пӗр издание те тӗпчесе тухмасӑр хӑварман. Унсӑр пуҫне И. Я. Яковлевран, ялти учительсенчен, Чӗмпӗр чӑваш шкулӗпе Хуснати учительсен семинарийӗнче вӗренекенсенчен илнӗ алҫыру материалӗсемпе анлӑн усӑ курнӑ. Хӑй те вӑл Хусан, Чӗмпӗр, Самар кӗпӗрнисене питӗ тӑтӑш тухса ҫӳренӗ. Ҫак пуян материала йӗркелеме Н. И. Ашмарина унӑн вӗренекенӗ Н. А. Резюков нумай пулӑшнӑ.*

*Словарь тунӑ ҫӗре Н. А. Резюков уйрӑмах 1925—30 ҫулсенче Хусанти ВПИре вӗреннӗ чух активлӑ хутшӑннӑ, Н. И. Ашмарин та ӑна хӑйӗн пӗрремӗш пулӑшаканӗ вырӑнне шутланӑ.*

*«Словарь йӗркелесси — питӗ кӑткӑс ӗҫ. Пӗччен эпӗ кунта ытлашши нимех те тӑваймӑп. Резюков каяс пулсан, опытлӑ работнике ҫухатнӑ пулӑттӑм»,— акӑ еплерех ҫырнӑ Н. И. Ашмарин, институт пӗтернӗ хыҫҫӑн Н. А. Резюкова ҫак ӗҫрех хӑварма ыйтса.*

*Н. А. Резюков Н. И. Ашмарина карточкӑсенчи текста (вӗсем вара вуншар пине ҫитнӗ) пӑхса тухма, вӗсене тӗпрен йӗркелеме пулӑшнӑ. Унӑнах фонетикӑллӑ текстсене тӗрӗс е тӗрӗс мар куҫарса ҫырнине пӑхмалла, сӑмахсене конкретлӑ тата абстрактлӑ пӗлтерӗшпе уйӑрассине тӗрӗслемелле пулнӑ. Малтанхи корректурӑна та Н. А. Резюковах вуланӑ.*

*«Эпӗ ӑна хама пулӑшма мӗнпур ӗҫе пӗтеричченех хӑварнӑ пулӑттӑм. Пирӗн ӗҫӗн наукӑллӑ идейине, ӑна епле пурнӑҫа кӗртессине вӑл лайӑх ӑнланать. Словарь умсӑмахӗпе указательне те вӑлах никамран ӑста ҫырма пултарӗ»,— акӑ епле хак парать аслӑ ученӑй Н. А. Резюкова хӑйӗн пӗр ҫырӑвӗнче.*

*Н. И. Ашмарин 1933 ҫулта вилнӗ. Пурӑннӑ чухне вӑл словарӗн 5 томне пичетлесе кӑларма ӗлкӗрнӗ. Ытти вуникӗ томне вара ун сотрудникӗсем йӗркене кӗртсе кун ҫути кӑтартнӑ. 6—17 томсене пичетленӗ чух уйрӑмах Н. А. Резюковӑн нумай вӑй хума тивнӗ. Вӑлах словарь хыҫсӑмахӗпе автор усӑ курнӑ источниксен ӑнлантарӑвне ҫырнӑ.*

*Н. А. Резюков ӗҫне Н. В. Никольский профессор пысӑк хак панӑ. «Словарь материалне йӗркелес тӗлӗшпе Н. И. Ашмарин профессорпа пӗрле темиҫе ҫул хушши тӑрӑшнӑ хыҫҫӑн эсир вӑл вилсен те унӑн пысӑкран та пысӑк ӗҫне — чӑваш словарьне туса пӗтерессине пӑрахмарӑр. Ҫакӑншӑн Сире, Николай Андреевич, мӗнпур таса чунлӑ наука работникӗ чӗререн тав тӑвать»,— ҫапла каланӑ вӑл ун пирки.*

*Ф. РЕКЕЕВ,*

*Чӑваш АССРӗнчи учительсен пӗлӗвне ӳстерекен Институт директорӗ.*